ШУПАШКАР 2014

# Ыран «РАÇÇЕЙ – СПОРТ ÇĔР-ШЫВĔ» форум уçăлать

*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

78 (2490) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
юпа, 8

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă



**Виталий МУТКО, Раççей Федерацийĕн спорт министрĕ:**

*«Юлашки çулсенче Чăваш Ен физкультурăпа спорт аталанăвĕнче пысăк ӳсĕмсем кăтартать. Шăпах çакна шута илсе «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума кунтаирттерме палăртнă. Чăваш Енре пурлăхпа техника никĕсĕ вăйлă аталанать, физкультурăпа спорт занятийĕсене хутшăнакансен йышĕ ӳсет. Чăнласах калатăп, кунта спорт резервне хатĕрлемелли тытăм çĕнелсе улшăннă. Паллах, çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командисенче республика представительстви хушăнсах тăрать. Чи кирли вара – Чăваш Ен юлашки çулсенче пысăк спорт турнирĕсене ирттермелли центр пулса тăни. Çавăнпа та РФ Президенчĕ Владимир Путин «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума Шупашкарта ирттерме йышăннă».*

## Ырă сунса кĕтетпĕр

**Висĕм кун Правительство çуртĕнче «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума тата Раççей Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен канаш ларăвне хатĕрлесе ирттерес енĕпе ĕçлекен республикăри йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕ иртнĕ. Унăн ĕçне Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăннă.**

Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне хутшăнакансене тата официаллă делегацисене кĕтсе илессипе тата ăсатассипе çыхăннă ыйтусем пирки ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов пĕлтернĕ. «Пĕр хăна та кăмăлсăр ан юлтăр тетпĕр», – палăртнă вăл.

ЧР информполитика министрĕ Валентина Андреева пĕлтернĕ тăрăх – юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче Чăваш наци телекуравĕ Хĕрлĕ тӳремре иртекен, спорт форумĕпе çыхăннă мероприятисене тӳрĕ эфирта кăтартĕ.

ЧР транспорт министрĕ Владимир Филиппов «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума хутшăнакансене транспортпа пĕр чăрмавсăр тивĕçтересси çинчен пĕлтернĕ.

Ларура палăртнă тăрăх – «Хальхи спорт. Çĕнĕлĕхсемпе малашлăх» спорт индустринчи çитĕнӳсен куравне те тĕплĕн хатĕрленеççĕ.

«Лавккасенче чăваш апат-çимĕçĕ ытларах пултăр. Ресторансенче те наци апатне сĕнччĕр», – палăртнă Чăваш Республикин Пуçлăхĕ. Хăнасене йышăнма хатĕрленекен 33 хăна çуртĕнче вара сувенирсем, спорт тумĕсем, роликсем хатĕрленĕ. Хăна çурчĕсемпе ресторансенче ĕçлекенсем форума хутшăнакансене чăваш паллилĕ тумсемпе, йăл кулăпа кĕтсе илĕç.

# Хускану – çирĕп сывлăх, савăк кăмăл

Ыран Чăваш Енре «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум уçăлать. Унта Раççейри тата 20 çĕр-шыври 3 пин хăна хутшăнĕ.

Мероприяти программине килĕшӳллĕн спортăн 8 тĕсĕпе ăсталăх класĕсем йĕркелĕç: çăмăл атлетика, триатлон, сĕтелçи теннисĕ, адаптаци спорчĕ (инвалидсем валли), спорт кĕрешĕвĕ, самбо, спорт гимнастики тата пăр çинче эрешлесе ярăнас тĕлĕшпе.

Ăсталăх класне ирттерекен 400 специалист вĕренсе тренер квалификацине ӳстернине ĕнентерекен удостоверение тивĕçĕ.

Ăсталăх класĕн программинче теори тата практика пайĕсем пулĕç. Сăмахран, триатлона хутшăнакансем спорт комплексне çитсе курĕç, темиçе лекци итлĕç. Практика занятине вара бассейнра йĕркелĕç. Ăсталăх класĕсем икĕ куна тăсăлĕç. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри Çĕнĕ Шупашкарти ачасемпе çамрăксен 3-мĕш спорт шкулĕнче пулĕ.

Ыран Шупашкарти Хĕрлĕ лапамра вунă сехетре «Зарядка çăлтăрпа пĕрле» физкультурăпа спорт мероприятийĕ иртĕ. Унта ватти-вĕтти хутшăнĕ. Пĕрлехи зарядкăна Раççейри тата Чăваш Енри паллă спортсменсем, форум хăнисем те хутшăнĕç. Ăна Дмитрий Губерниев паллă журналист ертсе пырĕ. Каярахпа вара савăнăçлă лару-тăрура Пĕтĕм тĕнчери спорт форумĕ уçăлать. Вăл 11 сехетре спорт парачĕпе пуçланĕ. Спорт «çăлтăрĕсем» ялавсемпе кубоксем йăтса утĕç. 12 сехетре Пĕтĕм тĕнчери хăвăрт утакансен кунĕ старт илет.

Утакансен кунĕ – Пĕтĕм тĕнчери «ТАФИСА» спорт ассоциацийĕ йĕркелекен тĕп мероприятисенчен пĕри. Çак ăмăрту çулсеренех 150 çĕр-шывра иртет. Унта 12 млн çын хутшăнать. Раççейре утакансен кунне «Спорт – пурин валли те» физкультурăпа спорт обществине йĕркелеме шаннă. Çакнашкал мероприяти пирĕн çĕршывра пĕрремĕш хут пулĕ. Стартта 15 пин ытла çын тухмалла. Республикăри паллă атлетсем ертсе пынипе вĕсем кӳлмек тавра утса çаврăнĕç.

Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче, форум вăхăтĕнче, Чăваш Енре ГТО нормативĕсене пурнăçламалли пĕрлехи кун та иртет. Çавна май тĕп хулари «Спартак» стадионта спорт уявĕ пулать. Кунта хутшăнакансем асăннă кунсенче чупассипе, сикессипе, шывра ишессипе тата спортăн ытти тĕсĕпе ăмăртĕç. Кăмăл тăвакансен малтан «Спартак» стадиона çитсе регистраципе маллелле.





Сăн ӳкерчĕксене www.cap.ru сайтран илнĕ

Тата чылай мероприяти иртĕ форум кунĕсенче. Массăллă информаци хатĕрĕсем вĕсене çутатсах тăрĕç.

Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕ – автомобильсĕр кун. Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне халалланă мероприятисен вăхăтĕнче транспорт çӳревне вăхăтлăха чармалли йышăнăва алă пуснă.

Хускану – пурнăç, çирĕп сывлăх. Ватăшăн та, çамрăк ăрушăн та усăллă вăл. Çавăнпах ĕнтĕ Патăрьел районĕнчи Турхан ялĕнчи ватăсем утма тăрăшаççĕ. Кунта 2008 çултанпа «Сывлăх» клуб ĕçлет. Унта 15 çын çӳрет. Клуба çӳрекенсенчен чи ватти – Лидия Васильевна Гусеева. Вăл 86 çулта! Ĕмĕрĕпех шкулта ĕçленĕ, ачасене нимĕç чĕлхи вĕрентнĕ. Любовь Васильевна Романова та унран кăшт çеç çамрăкрах. Çак ушкăнра чи кĕçĕннин вара – 60 çулта. Ватăсем урам хушшинче утнисĕр пуçне вăрмана та каяççĕ, пĕрле пухăнса сăвă-юрă шăрантараççĕ. Аслă ăру – çамрăксемшĕн тĕслĕх вырăнĕнче.

**Валентина ПЕТРОВА.**

Юпа уйăхĕн 4-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Çĕрпӳре иртнĕ Сывлăхпа спорт кунне хутшăннă. Уява «Çĕрпӳ районĕ – спорт районĕ» девизпа йĕркеленĕ.

«Спорт урамĕнче» 13 сывлăх лапамĕ ĕçленĕ. Уява хутшăннисем медицина сĕнĕвĕ илнĕ, тухтăрпа пĕрле усăлса çӳренĕ, ГТО нормативне пурнăçланă.

«Асамат» физкультурăпа спорт комплексĕ çывăхĕнче çĕнĕ стадион хута кайнă. Кунта футбол уйĕ, 500 çын вырнаçмалăх трибуна, чупмалли çул тата хоккейла вылямалли ятарлă лаптăк пур.

Михаил Васильевич Çĕрпӳ район командине Чăваш Ен Пуçлăхĕн Кубокĕпе чысланă. Çак команда шкул ачисен XVI спартакиадинче спортăн 25 тĕсĕпе ăмăртса пĕрремĕш вырăна тухнă. Республика ертӳçи çавăн пекех спорт аэробики тĕлĕшпе йĕркеленĕ регионсен хушшинчи тата бокс енĕпе ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри турнирсене хутшăннă.

**Елена Портнова, Елчĕкри «Улăп» физкультурăпа спорт комплексĕн директорĕн çумĕ:**

– «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум Чăваш Енре иртнишĕн мухтанатпăр, мăнаçланатпăр. Форум уçăлнă кун пирĕн районта «Сывлăх кунĕ» пулать. Тĕрлĕ эстафета, спорт мероприятийĕ иртĕ.

Районсенче спорт комплексĕсем ĕçлени çав тери лайăх. Кунта ватти-вĕтти çӳрет. Çулланнă хĕрарăмсем бассейнра шыва кĕме юратаççĕ пулсан, арçынсем сĕтелçи теннисне кăмăллаççĕ. Час-часах ăмăртусем ирттереççĕ. Сăмахран, Роберт Иванович Бобылев 86 çулта. Вăл çамрăксемшĕн тĕслĕх вырăнĕнче.

Çак комплекссем ял ачисене спорта юратма вĕрентеççĕ. Спорт вара хул-çурăма çеç мар, кăмăл-туйăма та çирĕплетет. Сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарать.

**Сергей Галкин, Шăмăршăри «Туслăх» ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн директорĕ:**

– «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум Чăваш Енре иртни савăнтарать. Ара, вăл тĕнче шайĕпе иртет-çке. Паллах, çак кунсенче эпир те айккинче юлмăпăр, районта спорт мероприятийĕсем ирттеретпĕр. Вĕсене йĕркелеме майсем çителĕклĕ. «Туслăх» спорт керменĕнче икĕ бассейн, фитнеспа тренажер залĕ, футбола, волейбола вылямалли ятарлă уйсем тата ытти те пур. Пирĕн пата шкула кайман ачасенчен пуçласа ватă çынсем таранах çӳреççĕ. Юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче районта – «Сывлăх кунĕ». Ун чухне пурне те тӳлевсĕр йышăнатпăр. Спорт пурне те кирлĕ. Унпа туслă çын сывлăхпа пурăнать, наркотик, сăра-эрех пирки шухăшламасть. Çамрăксене ырă витĕм кӳрет вăл.

«Хресчен сасси» – Вăрнар районĕнче

# Саппас пур чух кӳрше утмăн

Ял хуçалăхĕнче пушă вăхăт пачах та çук. Çĕр ĕçченĕ вырма хыççăн çĕр улми, кăшман пуссине тухрĕ. Вăрнар районĕнчи Карл Маркс ячĕллĕ хуçалăхра «иккĕмĕш çăкăра» икĕ çул лартмаççĕ. «Юлашки çулсенче çĕр улмирен тупăш илеймерĕмĕр эпир, – тет Марина Шумилова тĕп бухгалтер. – Ăна тивĕçлĕ хакпа сутма май килмерĕ. Çавăнпа та выльăх витĕр кăлартăмăр ун чухне». Çанталăк ура хуни те чылай хуçалăха çак культурăран хăтăлма хистерĕ. Хăшĕ-пĕри унăн лаптăкне самаях чакарчĕ. Юрать-ха, кăçал ăна йĕркеллех тирпейлесе кĕртрĕç. Иртнĕ çул пирки вара асăнма та кирлĕ мар.

Çак хуçалăх виççĕмĕш çул элита вăрлăх хатĕрлессипе ĕçлет. «Халĕ вăрлăх сутса тупăш тăватпăр, – калаçăвне малалла тăсрĕ Марина Васильевна. – Тыр-пула пуçтарма та çăмăлрах. Мĕншĕн тесен ку тĕлĕшпе техника çителĕклĕ пирĕн».

874 гектар çинчен пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене пухса кĕртнĕ. Тухăçпа та савăнма пултараççĕ Çавалкассисем. Кĕрхи тулăпа ыраша гектартан 45,5 центнер çапса тĕшĕленĕ. Вырмара «AGROS-530», «AGROS-580» тата «Вектор-410» комбайнсемпе Виталий Степанов, Владимир Михайлов тата Василий Николаев вăй хунă. Вĕсен пулăшаканĕсем те мухтава тивĕç: Валерий Шумилов, Данил Юсупов тата Эдуард Люллин. Комбайнерсен ĕç стажĕсем вун-вун çултан та иртнĕ. Çавăнпа вĕсем хăйсен ĕçне лайăх пĕлеççĕ. Хуçалăх ертӳçи Валерий Шумилов тăрăшуллă комбайнерсене хавхалантарма яланах май тупать. Ĕç укçи çумне тепĕр 50 процент хушса тӳлет, унсăр пуçне тырă парать. «Ĕççи вăхăтĕнче çын çителĕклĕ-и?» – кăсăклантăм эпĕ. «Бригадăра 9 çын ĕçлет. Вĕсем ĕлкĕрсе пыраççĕ», – пулчĕ хурав.

Тĕш тырăсăр пуçне нумай çул ӳсекен курăк çитĕнтереççĕ кунта. Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма чылай апат кирлĕ-çке. «Хĕл хырăмĕ пысăк» тени тĕрĕсех. Мăйракаллă шултра выльăх шучĕ – 966 пуç. Вĕсенчен 300-е яхăнăшĕ – сăвакан ĕне. «Ытларах сĕтпе тупăш илетпĕр. Кашни кун алла «чĕрĕ» укçа кĕрет-çке», – кăмăллăн сăмахлать тĕп бухгалтер. Хăй çавăнтах компьютерти кăтартупа паллаштарма васкарĕ. «Пĕтĕмĕшле сутса тунă укçан 56 процентне сĕтрен илетпĕр», – терĕ вăл. Çавалкассисем ăна талăкра 3 тонна ытла патшалăха ăсатаççĕ. Çулла вара – 4 тонна. Хакĕсем тĕрлĕрен: Канашсем – пĕр литра 17 тенкĕпе, Етĕрнесем – 16 тенкĕ те 50 пуспа, Вăрнарсем – 17 тенкĕпе йышăнаççĕ.

Аш-какай хакĕ кăштах хăпарни те савăнтарать. Ара, 600 пуç самăртмалли выльăх шутланать кунта.

Ял хуçалăх председателĕн çумĕпе Галина Абрамовăпа куккурус уйĕнче пулса куртăмăр. Çак культурăна кăçал 80 гектар çинче çитĕнтернĕ. Кунта пĕтĕм техника ĕçлет. Сергей Кириллов комбайнер çулать, Степан Петровпа Вячеслав Осипов шоферсем турттараççĕ. Çавалкассинче силос шăтăкĕ иккĕ, тепĕр иккĕшне сенаж хывнă. Сăкăт бригадинче вара – виççĕ. Утă-улăм та çителĕклĕ хатĕрленĕ. «Ял халăхне улăм паратăр-и?» – ыйтрăм кăсăкланса. «Ĕçченсене эпир утă паратпăр. Хальхи выльăх улăм çимест. Ăна килте ай сарăмĕ валли çеç усă куратпăр», – терĕ Галина Ивановна.

Ферма çывăхĕнче хуралса кайнă утă рулонĕсене асăрхарăм. Икĕ-виçĕ çул каялла хатĕрленисем иккен вĕсем. «Саппаспа пурăнаççĕ», – шухăшларăм хам ăшра. 2010 çулхи шăрăх çанталăк пире пурăнма хăнăхтарчĕ. Çапла, саппас пур чух кӳрше каймăн.

Ял хуçалăх ура çинче çирĕп тăни вырăнти халăха та пулăшу кӳрет. Выльăх-чĕрлĕх валли – утă-улăм, чăх-чĕп валли тĕш тырă пулатех. Ĕç вырăнĕ те пур. Унсăр пуçне кунашкал ялта кил-çурт та çирĕп, таврари уйхир те таса.

**Валентина ПЕТРОВА.**


Вячеслав Шашкин


Зоя Цыганова



Владимир Крипчаков

# Тар тăкни сая кайман

**Мускав, Краснодар, Баку... Ăçтан кăна килмен-тăр чăваш çимĕçне туянма. Пысăк машинăсем ир-ирех çĕр улми черетĕнче.**

**– Чăваш çĕр улмийĕ тутлă, кĕрпеклĕ. Вăрăм çула пăхмасăр çулсерен туянма килетпĕр, – терĕç Азербайджан çыннисем. – Шултрине Мускава илсе каятпăр, вăрлăх валли тултарнине – хамăр енне.**

Вăрнар тăрăхне ир-ирех çитнĕ вĕсем. Паянах каялла çула тухасшăн, анчах май килĕ-ши? Умра тата 4-5 машина-çке.

Вăрнар районĕнчи «Санары» агрофирмăн йĕтемĕ çинче ĕç шавĕ самантлăха та шăпланмасть. Уй-хиртен турттарса килекен «иккĕмĕш çăкăра» çынсем суйласа сутма хатĕрлеççĕ. Тулли михĕсене çийĕнчех машинăсене тиеççĕ. Вячеслав Шашкин тĕп агроном тăрăшсах блокнота михĕсен шутне çырса пырать.

– Куçпа пăхсах михĕсен виçине палăртатăр-им? – ыйтатăп унран.

– Вĕсене мĕн чухлĕ кĕнине пĕлсе çитнĕ ĕнтĕ. Йăнăшсан та пĕр-икĕ килоран ытла мар. Куллен 4-5 машина тултарса ăсататпăр. Кашнине 20-30 тоннăран кая мар кĕрет. Çавăнпа кашни миххе виçсе тăраймăн, – пĕлтерчĕ вăл.

Хуçалăхра вăрлăхлăх çĕр улми 500 тонна хывнă. Паллах, сутлăх та хăвараççĕ. Анчах ăна май килнĕ таран кĕркуннех сутма тăрăшаççĕ. Халĕ те уйран кĕнине хранилищĕне кĕртмесĕрех вырнаçтарса пыраççĕ. Килограмĕ вăтамран 9 тенкĕпе каять. Вăрлăхлăх суйлани хаклăрах та.

– Хакне пысăк тесе калаймăн, çапах тăкаксене саплаштарса тупăш илме çитет. Тата хаклăрах пулсан аванрахчĕ те... Киле килсех туяннине шута илсен аптăрамасть.

Çĕр улми кăçал 100 гектар йышăннă. Хуçалăх вăрлăх туса илессипе ĕçленĕ май çичĕ сорт çитĕнтернĕ. Çу çумăрлă килнĕрен тата анасене çум курăкран, хурт-кăпшанкăран вăхăтра тасатса кăпкалатса тăнăран тухăç аван. Гектартан вăтамран 300 центнер тухнă. «Беллароза», «Винетта», «Ломоносовский», «Удача» сортсен кăтартăвĕ уйрăмах пысăк. «Иккĕмĕш çăкăра» икĕ комбайн кăларса пуçтарать. Леонид Харитоновпа Геннадий Васильев комбайнерсем темиçе çул ĕнтĕ çак ĕçре. Вĕсем çăвĕпех çĕр улми уйĕсене пăхса тăнă. Пысăк тухăç механизаторсене савăнтарать: тар тăкни сая кайман.

Уй-хиртен 8 техника турттарса тăракан çĕр улмине суйласа иртме 46 çын хутшăнать. Иртен пуçласа таврана каç сăнĕ çапиччен ĕçлесе йĕтем çинче, уйра вăй хураççĕ. «Паян-ыран кăларса пĕтеретпĕрех, – теççĕ Санарсем. – 12 гектар кăна юлнă». Агрофирмăра тăрăшакансене ĕççинче кунне икĕ хут вĕри апат çитерессине йĕркеленĕ. Шалу енчен те кӳрентермеççĕ, куллен 700 тенке яхăн ĕçлесе илме пулать. Хĕрӳ тапхăрта ырми-канми вăй хуракан Алексей Иванов, Владимир Крипчаков, Александр Иванов, Николай Ильин, Андрей Артемьев, Николай Суров, Андрей Петров, Света Харитонова, Елена Мутина, Галина Юркина тата ытти ĕсчене чĕререн тав тăваççĕ ертӳçĕсем: «Пурте тăрăшуллă, маттур. Ĕç-хĕлте техника ытларах хуçалансан та, çынсем çителĕксĕр пулсан йывăр».


Игорь Степанов



Леонид Харитонов


Геннадий Шашкин

«Санары» агрофирма ӳсентăран отраслĕпе аталанса пырать. Ытти культурăна та çителĕклех акса-лартса хăвараççĕ. Тĕш тырăпа пăрça йышшисем пĕр пин гектар йышăннă.

– Вырма йывăррăн иртрĕ. Шăпах вырмана тухнă вăхăтра çанталăк çумăра кайрĕ. Мĕн çитĕнтернине уй-хиртен йăлтах пуçтарса кĕртрĕмĕр. Тăкаксăрах мар, хуçалăхĕпе гектартан вăтамран 42 центнер тухнине шута илсен ӳпкелешни те вырăнсăр. Кĕрхи культурăсем уйрăмах пысăк тухăç пачĕç, 50 центнер ытла. Çу кунĕсенче чылай районта типĕ те шăрăх тăнă вăхăтра пирĕн тăрăхра çумăр тăтăшах çукаласа тăчĕ. Çакă та тухăçа хăпартма пулăшрĕ, – каласа парать Вячеслав Иванович агроном.

Пӳлмене 4 пин тонна «сарă ылтăн» кĕнĕ. Кĕрхи культурăсене вăрлăх туса сутнă май хакĕ пысăкрах, килограмĕ вăтамран – 12-14, фураж 5 тенке кайнă. Викăпа пăрçана та гектартан 28-30 центнер вырса кĕртнĕ. Темиçе çул каялла вара горчица туса илме тытăннă. Çулран çул лаптăка пысăклатса пырса 70 гектара çитернĕ. Унăн тухăçĕ пысăках мар, ытти культурăсемпе танлаштарсан вара сутлăх хакĕ палăрмаллах пысăк. Иртнĕ çул ăна Мускав облаçне килограмне 28 тенкĕпе сутнă.

– Ăна туса илме чăрмавлă, вырса кĕртме кансĕр, лайăх вырнаçтарсан вара хуçалăх хыснине самай пуянлатать, – пĕлтерчĕ агроном. – Горчица вăрлăхне тасатса сутма хатĕрлесе хунă. Хальлĕхе туянас текенсем тупăнман-ха, нумаях выртмĕ тесе шутлатпăр.

Пушаннă уйсене кĕрхи культурăсене 350 гектар акса хăварнă.

Çĕртме тумаççĕ. Юлашки çулсенче çĕре сухаламасăрах акса хăвараççĕ. «Ноу-тил» меслечĕ иккен ку. Ют çĕр-шывсенче тахçанах çак мелпе ĕçлеççĕ-мĕн. Хăш енчен лайăх-ха вăл?

– Эпир кĕрхисене шăпах çапла акса хăвартăмăр. Вика, пăрça çĕре ахаль те çемçетеççĕ. Тата вĕсем хыççăн çум курăкĕ сахал. Хуçалăх уйĕсем сăртлă вырăнсенче вырнаçнă. Кĕркунне-çуркунне сухаласа тăнипе пулăхлă çĕр шыв-шурпа çырма-çатрана юхса каfive. Тĕкĕнмесен тăпра пусăрăннипе шыв-шур ăна пит сиенлеймест, – ăнлантарса парать хуçалăх ертӳçи Роберт Петров.

4-мĕш стр. ➔

Аслă Çĕнтерÿ: 70 çул

# Атте вăрçăран таврăнаймарĕ...

«Хресчен сасси» хаçатăн 70-мĕш номерĕнче «Çапăçатпăр тумлам юн юхиччен» статья пичетленсе тухнăччĕ. Унта Патăрьелĕнчи «Çăкăр» историпе этнографи музейĕнче упранакан фронтран янă çырусемпе паллаштарнăччĕ. Икĕ салтакăн шăпине пĕлменрен тăванĕсенчен, ачи-пăчинчен пулăшу ыйтнăччĕ.

Çак кăларăм ман алла та лекрĕ. Кÿршĕ-аршăпа йĕре-йĕре вуларăмăр атте çырăвне. Ман пек тăлăх çитĕннисем татах та пур пирĕн урамра. Эпĕ çырăва музее хăçан панине те манса кайнă. Шкул ачисем, çамрăксем ăна вуласа çĕр-шыва юратма вĕренччĕр тенĕччĕ.

Халĕ атте – Григорий Максимович Артемьев – çинчен каласа парам. Вăл 1914 çулта раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Алманчă ялĕнче çуралнă. 1938 çулта Патăрьелĕнчи педагогика училищине пĕтернĕ. Пĕр вăхăт ачасене истори вĕрентнĕ. Каярахпа финсемпе пуçланнă кампанине хутшăннă. Унтан сывах таврăннă яла. 1940 çулта авланнă. Анне, Олимпиада Николаевна, 1920 çулта Алманчărах çуралнă. Ăна Липа тесе чĕннĕ. Аттешĕн вăл яланах Липочка пулнă. 1941 çулта вĕсен хĕр çуралнă, Фаина ят панă. Çак ятпа 74 çул çÿретĕп эпĕ. Кукаçине раскулачить тусан тĕрмене лартнă. Ăна выçăпа вилесрен Фаина пекарь хăтарнă. Эпĕ çуралсан унăн ятне мана панă. Маншăн питĕ сумлă вăл.

Вăрçă пуçлансан тыла çирĕплетме аттене çара илесрен хăтарнă (броня панă). Анчах унпа килĕшмен вăл, хăй ирĕкĕпе çĕртме уйăхĕнчех фронта тухса кайнă. Эпĕ ун чухне ултă уйăхра çеç пулнăран аттене астумастăп. Малтанах ăна Талгар хулине илсе кайнă. Вăл Казахстанра Ала-Тау тăвĕ хушшинче вырнаçнă. 1942 çулта Рязаньти артиллери училищине пĕтернĕ хыççăн атте кĕçĕн лейтенант ятне илнĕ. Çак çулах авăн уйăхĕнче ăна взвод командирĕн тивĕçне шанса панă.

Атте вăрçăран таврăнаймарĕ. Çырура çырнă пек «пирĕн урамра ярмăркка» пулаймарĕ. Халĕ те ăна асăнман кун çук. Вăл ырă-сывă таврăннă пулсан пирĕн пурнăç та урăхларах килсе тухатчĕ. Ăна, аманнăскере, çар госпитальне илсе çитереймен. Вăл çул çинче ĕмĕрлĕхех куçне хупнă. Документ тăрăх – 1942 çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче вилнĕ. Малтан ăна Сталинград облаçĕнчи Пичуга ялĕн масарне пытарнă, кайран – тăванла вил тăприне. Унта 343 çын выртать. Сăмах май, Пичуга пĕчĕк ял, Атăл хĕрринче вырнаçнă.

Эпĕ хальхи вăхăтра хĕрĕм патĕнче Кÿкеçре пурăнатăп. Хĕре те Липа ят патăм, анне ятне.

Шел те, анне 1974 çулта вилчĕ. Тивĕçлĕ канăва тухаймарĕ. Манăн пурнăç çăмăлах килмерĕ. Ĕмĕрĕпех медицина ĕçченĕнче тăрăшрăм. Ĕç стажĕ – 44 çул.

Халĕ час-часах «вăрçă ачисем» тесе калаçççĕ. Ман шутпа, вăрçă ачисем – фронтран таврăнайман салтаксен ачисем. Ашшĕсем вăрçăран таврăннă ачасем нуша курсах кайман. Халĕ те лайăх пурăнаççĕ вĕсем. Мĕншĕн тесен ашшĕсене патшалăх тÿлевсĕр хваттерсемпе тивĕçтерет, çăмăл машинăсем парать. Унсăр пуçне пенси укçи те çителĕклĕ. Манăн вара уйрăм пÿлĕм те çук. Пĕр пÿлĕмлĕ хваттерте пурăнатпăр. Çур çул ялта атте-анне килĕнче кун кунлатăп, хĕл каçма Кÿкеçе килетĕп. Кăрлач уйăхĕнче 74 çул тултаратăп.

Аттене астумастăп пулсан та çав тери юрататăп ăна, унпа мухтанатăп.

**Фаина АРТЕМЬЕВА,**
**Патăрьел районĕ.**

АХРĂМ

# Иккĕмĕш кил çути

Пĕрремĕш хут эпĕ шкула пилĕк çултах кайнă. Пир сумкăна виçĕ тетрадь, туртма тата пушă одеколон кĕленчи чикнĕччĕ. Анне пÿртрен те кăларасшăн пулман. Урамра манран икĕ çул аслăрах юлташсем Варлам Геркипе Тăхăр пăт Генки кĕтсе тăраççĕ, кантăкран шакка-шакка шкула кайма васкатаççĕ. Аран хăтăлса тухрăм аннерен.

Шкула вĕренме илмерĕç. Пĕрремĕш урокрах вĕрентекен манран вулама-шутлама пĕлни çинчен ыйтрĕ те – эпĕ карланка хирсе, сасса улăштара-улăштара, одеколон кĕленчине алăра тытса «купăс калама» пуçларăм: ăн-на, ăн-на, ăйна, ыйна... Пĕтĕм класс ахăрса кулса ячĕ. Вĕрентекен мана килес çул çеç шкула килме хушрĕ те алăран çавăтса алăкран кăларса ячĕ. Эпĕ ниепле те «купăс калама» чарăнаймастăп. Урама тухсан вара икĕ куçран куççуль юхса анчĕ.

Тепĕр çултан мана пĕрремĕш класа çĕнĕ вĕрентекен Анна Васильевна Петряева питĕ кăмăллăн, ăшшăн кĕтсе илчĕ. Эпĕ сăвăсем калама та, вулама-шутлама та пĕлеттĕм ĕнтĕ. Таса та тĕрĕс çырма вĕрентĕм. Шкул алăкне уснă-усман класа кĕрсе лараттăм. Анна Васильевна пире анне пекех юратса пăхатчĕ, лăпкă сасăпа çемçен калаçатчĕ, ăс паратчĕ. Манăн чунра мĕн тери ырăччĕ. Шкул иккĕмĕш кил пулса тăчĕ.

Туканашри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн пуçламăш класĕсенче пире малалла Нина Сергеевна Орлова, Клавдия Федоровна Афанасьева, Юлия Ивановна Кондратьева пĕлÿ пачĕç. Мĕн тери чăтăм-тÿсĕмлĕ вĕрентекенсем! Вĕсем сасă хăпартса калаçнине нихçан та илтмен эпир. Арçын ачасен класра партăсем хушшинче чупкаласа илесси те пулнă ĕнтĕ. Çук, вĕсенчен нихăшĕ те никама ятламан, тÿлеккĕн кăна лăпланма ыйтатчĕç.

Аслăрах классенче вĕреннĕ çулсенче кăç пулттипе çеç шкултан уйрăлаттăмăр, библиотекăра черет тăрса кĕнеке улăштараттăмăр. Республикăри паллă çынсемпе, вăрçăпа ĕç ветеранĕсемпе тĕл пулусем ирттернĕ, ялти клубра концерт е спектакль лартма хатĕрленнĕ. Юратнă учительсем яланах пирĕнпе пĕрле пулнă. Ку çеç-и-ха! Николай Егорович Ларионов математик кашни кун кăнтăрлахи тăхтав вăхăтĕнче пĕр-пĕр çĕнĕ кĕнеке çинчен каласа кăтартатчĕ. Жюль Верн çырнă «Таинственный остров» роман çинчен чăвашла каланисене икĕ эрне ытла итлерĕмĕр. Кĕнекери ÿкерчĕксене пурте пăхса савăнтăмăр. Пĕтĕм шкул пухăнатчĕ пирĕн класа. Пÿлĕмре шăна вĕçни илтĕнетчĕ. Тепĕр кун каллех пысăк тăхтав çитессе пурте питĕ хытă кĕтеттĕмĕр.

Эпир хамăр вĕрентекенсене спорт ăмăртăвĕсенче, стадионта футбола вылянă çĕрте курattăмăр. Ăçтан вăхăт тупса, пур çĕре те çитме ĕлкĕретчĕç-ши вĕсем?

Туканашри çичĕ çул вĕренмелли шкул хыççăн Тĕрлемес вăтам шкулĕ те маншăн иккĕмĕш кил пулса тăчĕ. Класс ертÿçи – Лидия Ивановна Чалусова биолог, нимĕç чĕлхи вĕрентекен Николай Герасимович Краснов, Мария Арсентьевна Короткова географ, Мефодий Лукоянович Иванов физик тата ыттисем те çамрăк ăрăва çирĕп пĕлÿ парассишĕн ырми-канми ĕçлетчĕç. Мĕн тери аслă чĕреллĕччĕ вĕсем!

Пĕррехинче шкул пахчинче ĕçленĕ чухне эпĕ çĕр шапине тăпра муклашкипе пенĕччĕ. Лидия Ивановна çакна асăрхарĕ. Шапа сике-сике хупах çулçи айне пытансан та чĕнмерĕ вăл. Тепĕр урокра эпир çырхи вăрмана экскурсие кайрăмăр. Каллех айăпа кĕтĕм, юлташсемпе вылянă чух ăнсăртран кăткă йăви çине ярса пусрăм. Пирĕн вĕрентекен ку хутĕнче пачах курман пек пулчĕ. Анчах тепĕр эрнерен класри урокра çĕр шаписемпе вăрманти кăткăсен çут çанталăкри пĕлтерĕшĕ çинчен питĕ кăсăклă каласу ирттерчĕ. Эпĕ тÿрех хамăн пит хĕрелсе тухнине туйса илтĕм...

Шкулти литература кружокне ун чухне Николай Алексеевич Шадрин ертсе пыратчĕ. Кашни çур çулта пĕрре алăпа çырса журнал кăлараттăмăр. Ырă кăмăллă вĕрентекенччĕ пирĕн ертÿçĕ. Эпир унран пĕрремĕш хут хамăр Куславкка районĕнчи Аслă Салара пурăннă паллă этнограф тата фольклорист Василий Константинович Магницкий пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен илтнĕ. Тĕрлемес чăвашĕ, чăвашсен çырулла поэзине пуçаракансенчен пĕри Гаврил Алексеевич Кореньков çырнă сăвăсене вуласа кăтартатчĕ. Вĕсем килти арча тĕпĕнчех выртнă иккен! Ниçта та пичетленмен. Пире пурне те çĕнĕрен çĕнĕ хайлавсем çырма хавхалантаратчĕ Николай Алексеевич.

Тăван шкул – иккĕмĕш кил çути пурнăçри çула та çутатать. Хаклă вĕрентекенĕмĕрсем, мĕн ачаран сирĕн сăмахсене асра тытса пурăнатăп, сирĕн пулăшăва туятăп. Сирĕн валли манăн чĕрере яланах хăтлă вырăн пур.

**Герман ЖЕЛТУХИН,**
**Куславкка районĕ.**

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, юпа уйăхĕн 13-мĕшĕ**
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇŸПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «ТУСЛĂХ ЙЫВĂÇĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
20.45 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Ытлари кун, юпа уйăхĕн 14-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇŸПÇЕРЕН» (6+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
20.30 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Юн кун, юпа уйăхĕн 15-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
7.05 «ЮРАТУПА КĂВАКАРЧĂНСЕМ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
9.00 «ЮРĂСЕН ЮРРИ» КОНЦЕРТ (12+)
11.30 СЛЕД В ИСТОРИИ (6+)
12.00 «ÇУРАЛНĂ КУН ЯЧĔПЕ, ТВ! ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕВИДЕНИЙĔ 3 ÇУЛТА»
12.30 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (6+)
13.00 «НАОБУМ» (12+)
14.00 «СТО ЛИЦ СТОЛИЦЫ» (12+)
14.30 ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА»
15.00 «С ДНЕМ РОЖДЕНИЯ, ТВ!» 3 ГОДА НАЦИОНАЛЬНОМУ ТЕЛЕВИДЕНИЮ. ПРЯМОЕ ВКЛЮЧЕНИЕ
15.30 «ЯШ, ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ!» (12+)
16.00 ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА!» (12+)
16.30 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД»(12+)
17.00 «ТРИ ЖЕЛАНИЯ» К 3-ЛЕТИЮ НАЦИОНАЛЬНОГО ТЕЛЕВИДЕНИЯ ЧУВАШИИ (12+)
18.00 «С ДНЕМ РОЖДЕНИЯ, ТВ!» 3 ГОДА НАЦИОНАЛЬНОМУ ТЕЛЕВИДЕНИЮ. ПРЯМОЕ ВКЛЮЧЕНИЕ
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇŸПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «ÇУРАЛНĂ КУН ЯЧĔПЕ, ТВ! ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕВИДЕНИЙĔ 3 ÇУЛТА»
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «С ДНЕМ РОЖДЕНИЯ, ТВ!» 3 ГОДА НАЦИОНАЛЬНОМУ ТЕЛЕВИДЕНИЮ
20.00 «НАОБУМ» (12+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «С ДНЕМ РОЖДЕНИЯ, ТВ!» 3 ГОДА НАЦИОНАЛЬНОМУ ТЕЛЕВИДЕНИЮ
22.00 «ЮХХА» ДРАМА. ВЛАДИМИР КАРСАКОВ ФИЛЬМĔ. ПĔРРЕМĔШ ХУТ

**Кĕçнерни кун, юпа уйăхĕн 16-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
20.30 «АКТУАЛЬНОЕ ИНТЕРВЬЮ (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Эрне кун, юпа уйăхĕн 17-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
19.00 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (6+)
20.30 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
21.00 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
21.15 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РОССИЯ – СПОРТИВНАЯ ДЕРЖАВА». ДНЕВНИК ФОРУМА (6+)
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Шăмат кун, юпа уйăхĕн 18-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
9.30 «РАÇÇЕЙ – СПОРТ ÇĔР-ШЫВĔ». ФОРУМ ДНЕВНИКĔ (6+)
10.00 «ПĔЧЧЕННИСЕНЕ ОБЩЕЖИТИ ПАРАÇÇĔ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
17.30 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
18.00 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
19.00 «30 ЛЕТ НА СЦЕНЕ». ТВОРЧЕСКИЙ ВЕЧЕР ВАЛЕНТИНЫ ДВОЙНОВОЙ (12+)

**Вырсарни кун, юпа уйăхĕн 19-мĕшĕ**
9.00 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
9.30 «АКИЛБУПСЕР» (12+)
10.00 «РОССИЯ – СПОРТИВНАЯ ДЕРЖАВА». ДНЕВНИК ФОРУМА (6+)
17.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
17.30 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (6+)
18.00 «ДУХОВНАЯ ЖИЗНЬ» (12+)
18.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
19.00 «МАН УПĂШКА ПУЛСАМĂР». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Юпа, 8 – юн кун | Юпа, 9 – кĕçнерни кун | Юпа, 10 – эрне кун | Юпа, 11 – шăмат кун | Юпа, 12 – вырсарни кун | Юпа, 13 – тунти кун | Юпа, 14 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 7.07 | 7.09 | 7.11 | 7.13 | 7.15 | 7.18 | 7.20 |
| | анать | 18.08 | 18.06 | 18.03 | 18.01 | 17.58 | 17.56 | 17.53 |
| Кун тăршшĕ | | 11.01 | 10.57 | 10.52 | 10.48 | 10.43 | 10.38 | 10.33 |
| УЙĂХ | тăхри | тулли уйăх (14.49) | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 14-мĕш кун | 15-мĕш кун | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун |
| | | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче | Вăкăр паллинче | Вăкăр паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Рак паллинче |



Вячеслав Гусевпа Оксана Васильева

## Тар тăкни сая кайман

2-мĕш стр.

– Пусă çаврăнăшне пăхăнмалла. Тырă хыççăн çĕре çемçетме пăрçа, вика, горчица акса хăваратпăр. Кăçал пăрçа – 70, вика 90 гектар йышăннă.

«Ноу-тил» мелĕпе акма «Джон дир» сеялка туяннă. Çĕнĕлĕх çĕр пулăхне упранипе пĕрлех вăхăта, укçа-тенке самай перекетлет.

Роберт Игнатьевич хуçалăхри лару-тăрупа паллаштарнă май чунне ыраттаракан ыйтăва та хускатрĕ:

– Пире вĕçĕмсĕр тыр-пул, пахча çимĕç ытларах туса илме, лаптăксене ӳстерсе пыма ыйтаççĕ. Анчах чĕр тавара ăçта вырнаçтармалла? Шупашкарти элеватор тырăпа тулнă. Ытти çĕре те ăсаткаласа пăхрăмăр, каймасть паха чĕр тавар. Çакă кăçал тыр-пул ăнса пулнипе те çыхăннă тăр. Халĕ вăл складра хĕрсе выртать, пахалăхĕ чакать. Çĕр улми хумалли хранилищĕне те тырăпа тултартăмăр. Мĕн тăвăн, тухса тăкаймăн. Хресчен çимĕçĕ никама та кирлĕ мар тейĕн. Ниепле те планласа ĕçлеме хăнăхаймастпăр. Рынокра паян мĕн хаклă çавна туса илме хăтланатпăр. Чăваш Енре çĕр улми лаптăкĕсем мĕншĕн чакрĕç? Çанталăкпа кăна мар, çимĕçе сутма йывăрланнипе те çыхăннă ку. Сутаймасăр, вăхăтра кăларса илеймесĕр мĕн чухлĕ çĕр улми сая каймарĕ-ши хуçалăхсен? Эпир те 170 гектартан 100 кăна хăвартăмăр. Ĕçне кура тупăш илмелле пек, анчах продукци хакĕ хăпарманна пĕрех, – терĕ Р. Петров.

– Ют çĕр-шыв çимĕçне турттарма чарнă май выранта туса илнин хакĕ ӳсмĕ-ши? Тен, пирĕн çимĕçе те хаклама тытăнĕç?

– Çĕр-шывра тыр-пул, пахча çимĕç туса илме çĕр сителĕклех, çынсем те ĕçлеме пултараççĕ. Мĕншĕн яланах ют çĕр-шыв куçĕнчен пăхмалла? Вырăнти экономикăна, ял хуçалăхне çĕклес вырăнне вĕсене пуйтармалла-и? Хресчен ĕçне тивĕçлипе хакласан вăл выльăх-чĕрлĕх те тытать, тыр-пул та çитĕнтерет.

**Лариса НИКИТИНА.**

**Сăн ӳкерчĕкĕсем авторăн.**

## ВУЛАВĂШ

### Валентина ТАРАВАТ

# Итлемерĕм аннене

**Калав**

Пĕр чарăнми йĕрет пĕчĕк Маша. Кăкăр ачисем çанталăка пула та канăçсăрланаççĕ. Анчах та урамра тĕлĕнмелле ырă, тӳлек çанталăк. Нарăс уйăхĕнчи çил-тăмансем кĕрлесе иртсе кайрĕç ĕнтĕ. Пуш уйăхĕ пырать. Çуркунне çитни пур енчен те палăрать. Пĕлет Катя: апат ыйтать пĕчĕк Маша. Юлашки укçине парса ăсатрĕ хĕрарăм упăшкине пепке валли "молочная смесь" текеннине туянма. Хăш лавккаран, мĕнле фирма кăларнине илмеллине те çырса пачĕ. Хăех кайнă пулĕччĕ те – ачин кĕпи-йĕмне çума пуçланăччĕ. Пĕлнĕ пулсан-и? Туххăмрах хăй чупса кайса килнĕ пулĕччĕ. Сехет çурă çитет Витали тухса кайнăранпа.

Çичĕ уйăх анчах килененйĕ Маша амăшĕн кăкăрне ĕмсе. Кăкăр сĕчĕ чакса-чакса пычĕ те – пачах пĕтсе ларчĕ. Пĕчĕк пепке мĕнле тапаланса та, мĕнле тăрăшса та сывлăх сĕткенне кĕтсе илеймерĕ. Аптăранă енне амăшĕн кăкăрне тин кăна тухнă пĕчĕк шăлĕсемпе шатăр! çыртса та пăхрĕ. Çук та çук сиплĕ сĕткен. Катя ăна "молочная смесь" текеннипе апатлантарма пуçларĕ. Çак апата пепки антăхса кайсах çиет. Ара, кăкăра лăскаса нушаланмалли çук. Сĕт мĕн пирки çухалнине те туять Катя. Кунсерен эрех ĕçсе çӳрĕр çитеспе киле таврăнакан упăшкине кĕтсе нумай хуйхăрать-çке хĕрарăм. Аптăранă енне Катя шкап сунтăхне тĕрĕслерĕ. Пĕр ывăç манна кĕрпи юлнă иккен. Пăтă пĕçерме шыв лартса ячĕ вăл. Килте пĕр тумлам сĕт те çук. Илме укçа та çук. Шĕвек пăтă çине кăштах услам çу хушса хĕрне апатлантарма пуçларĕ хĕрарăм. Маша ĕмкĕчне çăварне хыптарсанах лăпланчĕ, антăхса çăтма пуçларĕ «пушă» пăтта. Пепке лăпланчĕ, анчах та шăпăр-шăпăр юхать хĕрарăм куçĕнчен тăварлă куççуль. Акă тумламсем пепкин пичĕ çине ӳкеççĕ. Çакна туйнă Маша канăçсăрланма пуçларĕ. Вăл çиме пăрахрĕ те амăшне ăнланнă пек куçĕнчен тинкерсе пăхрĕ. Алăка шалт-палт хупса упăшки килсе кĕчĕ. Аллисем пуш-пушах хăйĕн. Укçа та çук, ача валли апат та çук.

– Маша валли апат ăçта? Мĕн çитерес ман ăна халĕ?! – кăшкăрса йĕрет Катя.

– Кăкăр сĕчĕпе тăранса пурăнмалла ачан! Ăçта сан сĕтӳ, пуш кĕсре?! – аран-аран чĕлхине çаврăса кăшкăрчĕ те упăшки урайне çавăпа çулнă пек тĕшĕрĕлсе анчĕ.

«Мĕн тума парса ятăм-ха ăна юлашки укçана мухмăрпа нушаланнине кура тăркачах?» – хăйне ятла-ятла йĕрет хĕрарăм. Апат илме панă укçана ĕçсе яни пулнă-ха. Анчах кам шутланă ача валли апат илме панă укçана ĕçсе ярасса. Атте-çке вăл! Кам патне кивçене каймалла? Кӳршĕарша палламасть вăл. Палласан та, пĕрре-иккĕ курнă çынран кивçен укçа мĕнле ыйтăн? Яланхи пекех иккĕмĕш сыпăкри аппăшĕ патне шăнкăравлама тивет. Хĕрарăм урайĕнче выртакан упăшки урлă каçса телефон патне пырасшăн пулчĕ. Урине çĕкленĕччĕ кăна – такам çапнă пек каялла туртса илчĕ. Çук, пултараймасть вăл çын урлă каçма. Пăтă пĕçернĕ пĕчĕк кастрюль çине пăхса илчĕ. Машăна тепре апатлантармалăх пăтă юлнă унта. Пепкене çывăрма вырттарчĕ те ун çине вăраххăн сăнаса пăхрĕ. Маша сăнĕпе ашшĕне хăйпăтсах илнĕ тейĕн. Хура куç харшийĕсем пĕкĕ пек авăнчăк. Вĕсене такам бритвăпа хырса якатнă тейĕн. Сăмси лапчăкрах. Тутисем кăпăшка, кăштах мăкăрăлса тăраççĕ.

– Хальлĕхе кама хывнине питех пĕлеймĕн. Ӳснĕçем улшăнать-ха вăл, – сасăпах каласа хучĕ Катя хĕрĕ сăнпа улшăнасса ĕмĕтленнĕ пек.

Вăл пĕр кана пуçне çатăрласа тытса диван çинче ларчĕ. Шухăшсем, шухăшсем...

Ачалăх, студент пулнă вăхăт, Виталипе паллашни... Хĕрарăм майĕпен çĕкленчĕ те холодильникра упранакан кишĕрпе хĕрлĕ кăшмана ăшă шывпа çуса Маша валли хутăш сĕткен хатĕрлерĕ. Кăкăр ĕммен ачана витаминлă çимĕç ытларах та кирлĕ-çке. Алăка такам шаккарĕ. Иккĕмĕш сыпăкри аппăшĕ иккен.

– Сан мĕн, хăлху мăкалнă-им? Хăçантанпа шаккатăп алăка.

– Шухăша путнипе илтмесĕр юлнă.

– Так, – терĕ аппăшĕ урайĕнче выртакан Витали урлă сиксе каçса,– çемье пуçĕ канма выртнă иккен. Туятăп, тем, чун-чĕрере канлĕ мар.

– Хам та шăнкăравласшăнччĕ-ха. Юля аппа, пăртак укçа парса тăраймастăн-ши? Ача валли апат илме панă юлашки укçана ĕçсе янă Витали.

– Ме, ку сумкана пушат-ха. Маша валли "молочная смесь" текенни те пур унта.

Аппăшĕ пилĕк çĕр тенкĕ укçа кăларса пачĕ.

– Тавăрма кирлĕ мар. Йысну вахтăран таврăнчĕ. Мухтав Турра, ачасемшĕн ним те шеллемест Гена. Укçана мĕнле тăкакланине те тĕрĕслемест.

Катя куçĕнчен шултра тумламсем юхса анчĕç.

– Пилĕк çултан кăна çут тĕнчене килчĕ вĕт пепкӳ, – шеллесе пăхрĕ аппăшĕ, – унчен те ĕçмен кунĕ сайра пулнă упăшкун. Хăçан та пулин ĕç укçи аван илсе килни пулнă-и унăн?

– Авланиччен те сыпкаласа килетчĕ вăл. Аннепе мăн акка темиçе хутчен те асăрхаттарнă мана. Итлемерĕм. Шăпа çапла пулчĕ пуль. Маша çуралсан та икĕ эрне кăна тытăнса тăчĕ.

– Ĕçĕнче пĕлмеççĕ пуль. Алимент илмелле.

– Килĕшмест вăл. «Тапса кăларатăп», – тет. Хваттерĕ унăн-çке.

– Тĕрĕс! Тапса кăларатăп! – сиксе тăчĕ Витали. – Кам кунта ман килте мана вăрçса ларать?!

– Атя, япалусене пуçтар та тумлан,– терĕ аппăшĕ тутлă çывăракан Машăна алла илсе. Лешĕ вăранмарĕ те. Ырă сунакан çын алли канлĕх парать пуль çав. Ăшă комбинезон тăхăнтартрĕ те ачана аппăшĕ Витали çине шăтарасла пăхса каларĕ:

– Эпир ыран яла каятпăр. Катьăпа Машăна та çула май илетпĕр. Пурăнасах тесен, урăлма тăрăш. Кирлĕ пулсан – пырса илĕн çемйӳне.

– Эпĕ, эпĕ, мĕн... Эпĕ, эпĕ, мĕн... – тем каласшăн пулчĕ Витали. Алăк шалтлатса хупăнчĕ...

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 8.10 | 9.10 |
|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2–4 сехетре | +3 | +3 |
| | 14–16 сехетре | +4 | +7 |
| Çумăр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 761 | 755 |

ПАЯН – Сергий кунĕ. Пĕрремĕш хут юр çунă хыççăн ултă эрнерен çуна çулĕ йĕркеленет тенĕ. Çак кунран кая юлса пулакан купăстана касма пуçланă.


**СДАЕМ В АРЕНДУ**

АУ «Издательский дом «Хыпар» предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, д. 13, для использования под офис.

По всем вопросам обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.

## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

**ПРОДАЮ**

**6. Песок,** гравмассу, чернозем, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**550. Гравмассу, песок** речной, **щебень.** Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**583. Гравмассу, песок, торф, щебень.** Т. 89050282225.

**618. КОПАЛКИ,** сортировки, **ПЛУГИ, дискаторы, разбрасыватели.**

Дешево. Доставка! Т. 8-937-955-98-02.

Организатор торгов - конкурсный управляющий Колхоза "Колос" (Чувашская Республика, Батыревский район, д. Красномайск, ул. Молодежная, д.30, ОГРН 1022101831245, ИНН 2103001112) Хамматов Ренат Рамилевич (ИНН 162700401605, СНИЛС 110-483-129-08) член НП ОАУ "Авангард" (105062, г. Москва, ул. Макаренко, д. 5, стр. 1А, пом. I, комн. 8,9), действующий на основании решения Арбитражного суда Чувашской Республики от 15.01.2013 г. по делу №А79-14255/2011 сообщает, что торги по продаже предприятия Колхоза "Колос" в составе 154 объектов путем проведения аукциона, проведенных 30.09.2014г. на электронной площадке: **www.el-torg.com** признаны состоявшимися. Победителем признан Филиппов Александр Петрович, паспорт серии 9701 №389140, выдан Батыревским РОВД Чувашской Республики, 25.10.2001г., зарегистрированный по адресу ЧР, Батыревский район, с. Батырево, ул. Ленина, д.72 с предложением **1 304 520.00** рублей. Сведения о наличии заинтересованности победителя торгов по отношению к должнику, конкурсному управляющему, сведения об участии в капитале победителя торгов конкурсного управляющего, СРО арбитражных управляющих, членом или руководителем которой является конкурсный управляющий. - отсутствуют. Победитель торгов является конкурсным кредитором колхоза "Колос".



**«ХРЕСЧЕН САССИ»**
**Обществăпа политика хаçачĕ**
**Индекс 54838**
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

**ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР ТИВĔÇĔСЕНЕ ПУРНĂÇЛАКАН – Г. А. МАКСИМОВ**
**Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)**
**Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.**
**Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор сумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06**

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

**Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.**
**Заказ 3825**
**Тираж 4578**

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.